Çамрăксен пурнăçĕнчен

# Икĕ çул – пуçламăшĕ кăна

Юлашки çулсенче Раççей çĕршывĕнче Çамрăксен парламенчĕсене йĕркелесе ярас ĕç анлăн сарăлчĕ. Çамрăксен пĕрлешĕвĕсем республикăри пур кĕтесре те вăй илсе пыраççĕ. Тĕрлĕ канашсем ял поселенийĕсен шайĕнче кăна мар, районсенче те ĕçлеççĕ. Пирĕн Муркаш районĕнче те Çамрăксен парламенчĕ 2007 çултанпа ĕçлет.

Ăна çамрăксем те патшалăха ертсе пырас ĕçрен аякра тăрса ан юлччăр тесе депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Пухăвăн социаллă ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комисси председателĕ В.И. Вязов активлă пулăшнипе йĕркеленĕ. Право тата политика культурине, çĕршыва юратса халăхшăн яваплăх туйса аталанса пырассине çамрăксен те хутшăнмалла. Професси хăнăхăвĕсем те, çынсене ертсе пырассин хăнăхăвĕсем те çакăнтанах пуçланаççĕ. Пирĕн тĕп тĕллев вара – çамрăксен ыйтăвĕсене хӳтĕлесе вĕсене малалла çул парасси.

Икĕ çул хушши парламент членĕсем депутатсен районти Пухăвĕн комисси ларăвĕсене хутшăнса çамрăксен ыйтăвĕсене тата прависене хускатакан тĕрлĕ саккунсене, йышăнусене тишкерес ĕçе туса пычĕç. Çак тапхăрта ирттерме палăртса хунă ларусем те çамрăк парламентарисене кашни кварталтах пĕрле пухрĕç. Вĕсенчен пĕринче «Муркаш районĕн çамрăкĕсем: 2011-2020 çулсем» тĕллевлĕ программăна туса хурассипе ĕçлекен ушкăна суйласа унăн приоритетлă енĕсене палăртса хăварчĕç. Çак программăн тĕп тĕллевĕ çамрăксен политикине ертсе пырассине лайăхлатассипе, право тата экономика енĕпе пысăкрах утăмсем тăвассипе çыхăннă. Малаллахи çулсенче районти çамрăксен политикине аталантармалли программа 2008 çулта йышăннă республика программи çинче никĕсленнĕ.

Çамрăксен парламенчĕ хăйĕн ячĕпе кубок çĕнсе илессишĕн 7-9 классем хушшинче волейбол енĕпе ăмăрту ирттерме йышăннине те пурнăçларĕ. Çак вăйăсем малашне те кĕркуннехи каникул вăхăтĕнче «Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн!» акци пынă чухне иртмелле.

Пĕлтĕр парламентăн активлă членĕсем Чăваш патшалăх Канашĕ çумĕнчи çамрăксен палатин ĕçĕпе унăн ларăвне хутшăнса паллашрĕç, Шупашкарта иртнĕ «Агломераци М–7» районсем хушшинчи 1-мĕш саммитра республикăн çурçĕр пайĕнчи территорисене пĕрлештерсе агломераци йĕркелеме палăртнă проекта тишкерессине те хутшăнчĕç, республикăри «Ялти çамрăксен ыйтăвĕсемпе малашлăхĕ» интернет-конференци те Муркаш районĕнчи Çамрăксен парламентне айккинче хăвармарĕ. Парламент пулăшăвĕпе «Муркаш районĕнчи çамрăк ертӳçĕсен шкулĕ» ĕçлеме тытăнчĕ. Çапла пĕтĕмĕшле тĕрлĕ енлĕ ĕç туса пыраççĕ çамрăксем.

2010 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче Çамрăксен парламенчĕн регламентĕнче палăртнă тăрăх, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи Çамрăксен пĕрремĕш парламенчĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Парламентăн иккĕмĕш пухăвĕнче – районти тĕрлĕ организаципе предприятисенче, учрежденисенче ĕçлекен, районти ял тăрăхĕсенче пурăнакан çамрăк специалистсем. Вĕсен списокне шăпах депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 39-мĕш ларăвĕнче пăхса тухса çирĕплетĕç, Çамрăксен парламенчĕн ĕçхĕлне те тишкерсе пĕтĕмлетӳсем тăвĕç.

**Е. ЧЕРНОВА,**
**Çамрăксен парламенчĕн ертӳçи.**

Паян – Архивсен кунĕ

# Информацие пуян учреждени

90 çул каялла Чăваш Автономине туса хурсанах архивсем пуçтарас тата вĕсене упрас ыйту та тухса тăнă. 1923 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Автономи округĕнче архивсене сыхласси пирки тухнă йышăну хыççăн «пăр тапранать». Архив учрежденийĕсен сечĕ сарăлма тытăнать, уессенчи ĕç комитечĕсенче архив бюровĕн уполномоченнăйĕсем ĕçлеме тытăнаççĕ, архивсем йĕркеленеççĕ.

Каярах çĕнĕрен йĕркеленекен кашни райĕçтăвком çумĕнче район архивĕ туса хурассине те пурнăçа кĕртеççĕ. 1936 çултанпа вара кашни районтах архив ĕçлет, вĕсенче ертӳçĕ те пулать. Ĕçе кирлĕ пек пурнăçласа архивсем тĕрлĕ документ упракансем пулса тăраççĕ. Хăшĕсене республикăн тĕп патшалăх архивне те парса тăраççĕ.

Муркаш районне, ăна 1944 çулта йĕркеленĕ хыççăн, çак ятпа тытăнса тăрассине 1959 çулта пăрахăçланă. Çапла вара çав çултан пуçласа 1964 çулччен кунти архив ĕçĕ епле пыни çинчен материалсем çук.

1964 çулта района çĕнĕрен йĕркелесе янă хыççăн тепĕр икĕ çултан çеç архива материалсем пуçтарăнма пуçлаççĕ. Район архивĕн ĕçченĕ Фекла Васильевна Кожевникова архив валли ятарлă çурт пулмасăрах ĕçе тытăнать. Вăл ытларах çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе республика архивне тухса çӳрет, учрежденисемпе предприятисенче документсем йĕркелет.

Тĕрлĕ çулсенче архив заведующийĕ пулса çаксем ĕçленĕ: 1948-1949 çулсенче – Д.Д. Казаков, 1949-1955 çулсенче – В.Е. Васильев, 1956-1959 çулсенче – М.А. Пискалина, 1964 -1981 çулсенче – Ф.В. Кожевникова, 1993-1995 çулсенче – Р.Е. Седатлова.

Чăваш Республикин архив фондне йĕркелес ĕçре Людмила Павловна Николаеван тӳпи пысăк. Вăл 1981 çултан пуçласа 24 çул хушши Муркаш район архивĕн ертӳçинче вăй хунă, 2006 çулхи январĕн 10-мĕшĕнчен 2009 çулхи май уйăхĕччен «Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи муниципаллă архивĕ» муниципаллă учрежденине ертсе пынă.

Архив ĕçĕн аталанăвне паянхи кун Роза Егоровна Седатлова йĕркелесе пырать. Вăл 2006 çултанпа культура тата архив ĕçĕсен пайĕн тĕп специалисчĕ пулса тăрать.

Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн муниципаллă учрежденире 1923-2008 çулсенчи 35724 документ 263 фондра упранать.

2009 çулта пирĕн пата архив информацине илес тесе 5000 ытла çын пычĕ, 200 ытла тĕпчевçĕпе таврапĕлӳçĕн ыйтăвĕсене таттса пама 1393 ĕç тупса парса пулăшрăмăр.

**И. НИКОЛАЕВА,**
**муниципаллă учреждени заведующийĕ.**

Вĕрентекен çулталăкĕ

# Хамăр учительпе мăнаçланатпăр

2008 çулта Шомик шкулне çĕнĕ учитель ĕçлеме килчĕ. Физкультура учителĕ – Николай Иванович Зайцев. Эпир ун пирки малтанах нимĕн те пĕлмен, ытти учительсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть, тесе шутлаттăмăр. Вăхăт иртнĕçемĕн вĕренекенсем унпа туслашрĕç...

Икĕ çул иртсе кайрĕ. Февраль уйăхĕнче кăçал шкулта паттăрлăх урокĕсем пуласса пĕлтерчĕç. Пĕр урокне вара Афган вăрçипе çыхăнтарассине пĕлтерчĕç. Шкула çак вăрçа хутшăннисем те çитрĕç. Хăнасемпе паллаштарса вĕсене сцена çине хăпарма ыйтрĕç. «...Зайцев Николай Иванович, тархасшăн», – тенипе эпир çак çын çине татах та тимлĕрех пăхрăмăр. Çар çи-пуçне тăхăннă, кăкăрĕ çине сахал мар медаль çакнă арçын сцена çине хăпарчĕ. Акă вăл, пирĕн физкультура учителĕ...

Сергей Александрович Мягков тĕл пулăва гитарăпа кĕвĕ каласа юрăран пуçларĕ. Афган çĕрĕ çинчи вăрçă çинчен, амăшĕсем хăйсен ывăлĕсене вăрçа ăсатса кĕтсе илейменни çинчен... Вячеслав Евсеевич Киршев, Афган вăрçине хутшăннисен районти канашĕн председателĕ, вăрçăри хăрушă самантсене куç умне кăларчĕ. Кашнин куççуль капланса килчĕ пулĕ.

Хыççăн пирĕн учителе сăмах пачĕç. Эпир Николай Иванович Калайкасси шкулĕнче музей уçас тесе чылай вăй хунине пĕлтĕмĕр. Вăл Афганистанра пуç хунă юлташĕсен амăшĕсем патĕнче кашни çулах пулнине те, интернационалист-салтаксен ячĕпе çулсерен спорт вăййине ирттерекен пуçаруçăсенчен пĕри пулнине те, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ юлташĕсен вил тăприсене тирпей-илем кĕртсе тăнине те...

Акă мĕнле пултаруллă та хастар иккен пирĕн учитель! Вĕренекенĕсемпе юнашар пулса вăл, паллах, кăкăрне çапса çӳремен. Эпир вара питĕ сахал пĕлнĕ Николай Иванович пирки. Халĕ вара эпир унран час-часах Афганистан пирки тĕпчетпĕр.

Вырăс чĕлхи урокĕнче çак тĕл пулу пирки сочинени çыртăмăр. Ваня Бурмисов тĕлĕнмелле йĕркесем калăплана: «Манăçми мухтав вĕсене, çавăнта çапăçнисене, çавăнта пуç хунисене тата çавăн хыççăн чĕрĕ юлнисене...».

Тавах сире, «афганецсем». Эпир халĕ чылай пулăм çине урăхларах пăхма пуçларăмăр.

**И. НИКОЛАЕВА, Шомик шкулĕнче 6 класра вĕренекен.**

Редакци почтинчен

# Ĕç те вĕренӳпе танах

Çын ĕçпе пурăнать: ĕç пурнăçа тытса тăрать-çке-ха. Хальхи вăхăтра вара ачасене ĕçе хăнăхтарса ӳстерме тăрăшни ытлах курăнмасть. Çуллахи вăхăтра, калăпăр, ачасем пиçен, вĕлтрен, хупах пуçтарса сыснасене панинчен те усси пысăк. Вĕсене типĕтсен хĕл кунĕнче те выльăха çитерме аван.

Кил таврашĕнче çын ĕçлет пулсан, вăл, ахăртнех, ытти çĕрте те тăрăшуллă пулать. Çавăнпа та ачаранах ĕç воспитанийĕ вĕренӳ воспитанийĕн ытти енĕсем айне пулса юлмалла мар тесе шутлатăп эпĕ. Манпа нумайăшĕ килĕшесси те иккĕлентермест. Ĕç те вĕренӳпе танах вĕт.

Ĕçлени сывлăха та тытса тăма май парать. Уçă сывлăшра ĕçленин усси пысăк пулнине пире ачаранпах вĕрентнĕ. Харпăр хăй ĕçне аван йĕркелеме вĕренсе çитни вара вăхăта чылай перекетлеме пулăшать, вăхăтпа усă курма вĕрентет. Апла ĕçе те пĕчĕкренех хăнăхтармалла. Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ «ачана колхоз хирне çĕр улми пуçтарма ямастăп-ха» тени те хăйсене хăйсемех улталанăн туйăнать мар-и? «Колхозсем» вăхăтĕнче ӳснĕскерсем, эпир нихăшĕ те ĕçлемесĕр ӳсмен мар-и тата?

Вулакансем мĕн шухăшлаççĕ-ши çакăн пирки? Район хаçатне çырса пĕлтерсен кăмăллă пулмалла.

**Е. ПЕТРОВ.**

Шаптак ялĕ.

Спорт хыпарĕсем

# Район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илме васкăр

**Мартăн 13-мĕшĕнче йĕлтĕрпе чупса район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăрту иртет. Вăл йăлана кĕнĕ вырăнта – йĕлтĕр базинче – иртет. Ăмăрту 11 сехетре пуçланать.**

**Командăра 18 çултан иртнĕ 2 арçынпа 2 хĕрарăм пулмалла. Эстафета çакăн пек иртет: 1-мĕш тата 3-мĕш этап – хĕрарăмсем 2 км, 2-мĕш тата 4-мĕш этап – арçынсем 3 км чупаççĕ. Çавăн пекех VIP-чупу та пулать. Ку дистанци – 2 км.**

**Пур организацисемпе предприятисен, учрежденисемпе ял тăрăхĕсен, хуçалăхсен тата район администрацийĕн пайĕсен командисене те йыхравлатпăр.**

# Мини-футболла вылярĕç

Ĕçлекенсен спартакиади шучĕпе мартăн 6-мĕшĕнче районта хĕллехи мини-футбол енĕпе ăмăрту иртрĕ. Çак вăйăсене пурĕ 4 команда хутшăнчĕ. Çĕнтерӳçĕ ятне Муркаш ял тăрăхĕн команди тивĕçрĕ. 2-мĕш вырăнта – «Передовик», 3-мĕш вырăнта – «Муркаш» команда.

Лайăх вылякансене уйрăммăн палăртнă: Артур Рыжков («Передовик»), Александр Сафронов (Муркаш ял тăрăхĕн команди), Дмитрий Рыжков (Муркаш ял тăрăхĕн команди).

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем: ячмень, пшеницу, овес. Покупаем бычков. Тел.: 8-906-381-95-03.** 2-2.

**ВНИМАНИЕ, ТОЛЬКО 1 ДЕНЬ!**
**14 марта с 9-00 час. до 18-00 час.**
**в ДК с. Большой Сундырь состоится ярмарка-продажа ульяновской и белорусской обуви.**
**Пенсионерам – скидка!**

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
принимаем
СБЕРЕЖЕНИЯ
под достойные проценты
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10,
8 927 667-48-92
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.
КПКГ “КАПИТАЛ”
работаем с пайщиками

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84.** 4-5.




**Продаем керамзитобетонные блоки от 26 руб. Весенние скидки. «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78.** 3-5.




**Утерянный военный билет серии АВ № 1045374, выданный 28.11.2003 г. ВК Моргаушского района ЧР на имя Ксенофонтова Николая Валериевича, считать недействительным.**

Муркашри вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул хушши пуçламăш класс вĕрентекенĕ пулса ĕçленĕ

**Феодосия Артемьевна**
**АРТЕМЬЕВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 09.03.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.